24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ОКТЯБРЬ 1 ЮНКУН 231 (5946) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Алла хĕçпăшал тытса çапăçма тăрăшса вĕренер

Паян пирĕн тăван çĕршывăн ывăлĕсем кумайĕшĕ çар ĕçне вĕренме тытăнаççĕ. Вĕсем отечественнăй аслă вăрçăра тăшмана пĕтерсе тăкма алла хĕçпăшал тытса çапăçмашкăн хатĕрленеççĕ.

Пирĕн хамăран пĕтĕм ĕçе фронтра çĕнтерӳ тăвас, тăшмана аркатса тăкас енĕпе туса пымалла. Çавăнпа та ССР Союзĕн граждăнĕсен çар ĕçне вĕренессине большевикла çине тăрса пурнăçа хĕртсе шырас пулать.

Çак ответлă ĕçе пурнăçа кĕртме партипе совет организацийĕсем тата çарĕç органĕсем начар мар хатĕрленчĕç. Вĕсем Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленине ĕçсыннисене ăнлантарса парас ĕçе организацилерĕç. Обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕренме тивĕçлисене шута илсе тухрĕç, вĕренме кирлĕ хатĕрсене тупса хатĕрлерĕç, вĕренӳ пункчĕсене йĕркелесе çитерчĕç, командирсемпе политработниксене пухса, çак ĕçе мĕнле туса пымалли çинчен вĕрентрĕç. Канаш районĕнче алла хĕçпăшал тытма пултаракан çынсене пурне те çар ĕçне вĕрентме хатĕрленсе çитнĕ: учебнăй подразделенисене туса йĕркеленĕ, командирсемпе политруксене пухса канашланă, вĕренмелли хатĕрсемпе пособисене шута илнĕ, винтовкăсемпе гранатăсене çĕршер штук йывăçран туса хатĕрленĕ, вĕренӳ пункчĕсене йĕркелесе илемлетнĕ. Çавăн пекех ытти нумай районсенче те çак ĕçе пуçăнма хатĕрленсе çитнĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа рабочисемпе служащисем производствăран уйăрлмасăр ĕрнере виçĕ кун виçшер сехет хушши çар ĕçне вĕренеççĕ. Колхозниксем производствăран уйăрăлса, программăна вĕренсе тухаччен кашни кунах вĕренмелле. Вĕсене пĕр ушкăн хыççăн теприне вĕрентсе пыраççĕ. Çавăнпа пĕрлех тактикăллă занятисене выçсарникунсенче ирттересси правило вырăннех пулса тăмалла. Çар ĕçне вĕрентессине предприятисен, учрежденисен, колхозсен ĕç йĕркине пăсмасăр туса пырас пулать. Çар ĕçне вĕрентессите, производствăра йĕркеллĕ ĕçлесси те пĕр вăхăтрах пулса пыччăр. Çар ĕçне вĕренме хутшăннă кашни ĕççыннисен производствăра хăйне шеллемесĕр, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Колхозниксене çар ĕçне вĕрентме явăçтарни колхозсен ĕçне чăмрав кӳмелле мар. Çав тĕллевпе тунă та ĕнтĕ колхозниксене пĕр ушкăн хыççăн теприне вĕрентсе хатĕрлемелли йĕркене.

Совет Союзĕн хĕçпăшал тытма пултаракан кашни гражданиненĕн çар ĕçне вĕренес пулать, тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте кирлĕ пĕлӳсене туянмалла, хирĕç-хăй минутăра та тăван çĕршыва сыхламашкăн Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕр пулмалла. Çар ĕçне вĕренме явăçтарнисен пурин те программăра кăтартнисене пĕтĕмпех отлично вĕренме тăрăшмалла, мĕншĕн тесен пирĕн пăшалран пеме, штыкпа çапăçма, гранатăсемпе бомбăсене тĕл ывăтма, тăшманăн танкĕсемпе машинисене, орудийĕсене аркатса тăкма тăшманран лайăх пĕлес пулать.

Çар ĕçне вĕренекенсен кĕске вăхăт хушшинчех—110 сехетре—пит нумай пĕлӳсем илмелле. Программăра кăтартнисене пурне те тĕплĕн вĕренсе çитмелле. Çавăнпа вĕренӳри кашни минутăпа тухăçлăн усă курас пулать.

Программăн вăл е ку уйăмне, кашни темăна вĕреннĕ чухне мĕн вĕренесси çинчен руководителăн хăйĕн пит лайăх каласа е кăтартса памалла, вара çавна вĕренекенсен практикăра вĕренесе пăхмелле. Занятие кирек ăçта иртерĕсен те, кирек мĕнле темăна вĕренсен те, вĕсене практикăллă хăнăхусемпе çыхăнтармалла. Сахалтарах калаçмалла, тĕллевлĕ практикăллă вĕренӳ ытларах пулмалла. Кашни боец ун умне лартнă задачăсене тĕрĕс пурнăçлама вĕренсе çитмелле. Вĕренӳре условнăçсем пулмалла мар, вăрçăра пулакан йывăрлăхсене тӳссе ирттерме хăнăхса пымалла.

Çар ĕçне вĕрентнин пахалăхĕ пуринчен ытларах командирсем-инструкторсем тăрăшса ĕçленинчен, хăйсем пример кăтартса вĕрентсе пынинчен килет. Çавăнпа пĕрлех вĕсен кашни кунах хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстерсе пымалла. Çавăн пек туса пырсан кăна командир-инструктор, вĕренекенсене программăра кăтартнă çар ĕçĕсене вĕрентнипе пĕрлех, действующи Хĕрлĕ Çăран боевой опычĕпе паллаштарма, вĕренӳ пахалăхне ӳстерсе пыма пултарать.

Подразделенисенче политикăллă ĕçе туса пырасси çине уйăмăнах хытă çăвăрăнса пăхма кирлĕ. Политработниксен çар ĕçне вĕренекенсене политикăллă пĕлӳсем пама, вĕсенчен политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхнĕ боецсем хатĕрлеме тăрăшмалла. Политработниксем çине парти пысăк ĕç хунă. Политикăна вĕрентнисĕр пуçне, вĕсен командирсемпе пĕрле подразделенисенче çарти пек çирĕп дисциплина тăвас, пурне те çар ĕçне лайăх вĕрентсе çитерес тĕлĕшпе çине тăрса тата тимлĕн ĕçлес пулать. Çар ĕçне вĕренекен граждании хăйĕн вăрçари обязанноçĕсене лайăх пĕлсе тăтăр, вăрçăра çапăçма лайăх вĕрентĕр, противника хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйне шеллемесĕр çапăçма хатĕр пултăр.

Çар ĕçне вĕренессинче коммунистсемпе комсомолецсем ытти сене пример кăтартмалла. Вĕсен подразделенисенче çирĕп йĕрке тăвас, çар пĕлӳлĕхĕсене вĕренсе алла илес тĕлĕшпе малта пымалла. Çав примереене курса, çар ĕçне вĕренекенсем пурте вĕсем пек пулма тăрăшăр.

Вĕренӳн малтанхи кунĕсенчен пуçласах подразделенисенче хурçă пек çирĕп дисциплина пултăр, занятисене вăхăтра, пĕр минута та кая юлмасăр пуçăнмалла. Вĕренӳ пунктне пырассинчен пăрăнаканскем пулмалла мар, вĕсене хытă айăпламалла пек пăхас пулать. Подразделенисенче çирĕп йĕрке пулмалла. Командир пане приказсене çийĕнчех тата тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырасси—закон пулса тăмалла. Çак ĕç ăнăçлăн пулса пытăр тесен, партипе совет органĕсен тата ытти общественăллă организацисен Оборонăн Государственный Комитечĕн постановленине пурнăçа кĕртес ĕçре çарĕç комиссариачĕсене пур енчен те пулленех пулăшса пырас пулать.

Ĕçсыннисем çар ĕçне вĕренни социализмлă совет государствин вăй-хăватне ӳстерет. Çакă вара гитлерла Германипе унăн «союзникĕсен» фашистла йыткĕтĕвĕсене çапса аркатас вăхăта татах та хăвăртрах çывхартĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

ÇĔРПУ. Шупашкарта Ленин ячĕпе тăракан фабрика коллективĕ чĕнсе каланине районри комсомолецсемпе комсомолкăсем тата союзра тăман çамрăксем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Вĕсем фабрика коллективĕн пуçарăвне ырласа, Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем пысăк хастарлăхпа пухма тытăнчĕç.

«Красный бригадир» колхоз çумĕнчи комсомол организацинчи комсомолецсемпе комсомолкăсем 2—3 кун хушшинче пĕр мăшăр çăматă, 10 мăшăр носки, 12 мăшăр алшăш, 4 килограмм çăм пухса пачĕç. Çавăн пекех «Шурăмпуç» колхоз çумĕнчи комсомол организацинчи комсомолецсемпе комсомолкăсем те 10 тир, 3 мăшăр носки, 7 килограмм çăм, фельдшерсен шкулĕнчи комсомолецсемпе вĕренекен çамрăксем 3,8 килограмм çăм, 35 мăшăр алшăш, 5 мăшăр носки, 3 шарф, 2 тир; Чурачăкри вăтам шкулти комсомолецсемпе вĕренекенсем 240 тенкĕ укçа, пĕр çыхнă кĕпе, 2 метр тĕртнĕ пиҫĕр, 4 тир, 2 килограмм çăм т. ыт. те пухса пачĕç.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе комсомолецсемпе комсомолкăсем тата союзра тăман çамрăксем кунран кунах вăйлатса пыраççĕ. Вĕсем сентябрĕн 24-мĕш тĕлне 7 мăшăр çăматă, 2 фуфайка, 2 ăшă брюки, 67 мăшăр перчатка, 52 мăшăр алшăш, 50 мăшăр носки, 24 килограмм çăм т. ыт. те пухрĕç.

А. ВАСИЛЬЕВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

* * *

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинатри рабочисем Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем параççĕ. Иккĕмĕш номерлĕ цехри смена мастерĕсем Б. Борзова—ăшă чулха, Байняшев—пĕрер мăшăр бурки тата ăшă чулха, Уляхин—ăшă кĕпе-йĕм, шарф тата чулха пачĕç. Партбюро секретарĕ Подклетнов юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕр мăшăр çăматă тата çĕлĕк пачĕ.

Комбинатри рабочисем сентябрĕн 22-мĕшне Хĕрлĕ Çар валли 17 ăшă кĕпе, 7 йĕм, 25 мăшăр чулха, 13 мăшăр çăматă, 15 мăшăр ăшă алшăш тата ытти ялалсем те пачĕç.

М. ЛИСИНА.

* * *

ШАХАСАН. Ухман ялсоветĕнчи советпа колхоз активĕ Хĕрлĕ Çар валли ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Ялти активистсем колхозниксене ăшă тумтир пухма кирли çинчен каласа кăтартаççĕ, Хĕрлĕ Çар валли хăйсен япалисене ытти çынсенчен малтан параççĕ.

Ухман колхозĕн председателĕ Прокопий Михайлов 2 тир, 400 грамм çăм, пĕр çĕнĕ шлем пачĕ, пĕр мăшăр çăматă туса пама пулчĕ. Колхоз председателĕн заместителĕ Ник. Герасимов пĕрер мăшăр алшăпа чулха пачĕ. 55 çулхи колхозник Иван Рогожин пĕр тир, пĕр алшăлли, 400 грамм çăм пачĕ. Бригадир Иван Македонов — пĕр çĕлĕк, пĕр мăшăр чулха тата алшăлли, звеновод Федора Григорьева—пĕр тир, 400 грамм çăм, 2 алшăлли, пĕрер мăшăр чулха тата алшăш, колхозниксем Александр Петров — 400 грамм çăм, пĕр тир, пĕр мăшăр çăм чулха, Илларион Яковлев—пĕр тир тата алшăлли пачĕç. Вĕсене кура ытти колхозниксем те Хĕрлĕ Çар валли ăшă япалисем параççĕ.

Амвросий Абрамов колхозникăн икĕ ывăлĕ — Павелпа Константин — Хĕрлĕ Çар ретĕнче. Вăл хăй совет воинĕсем валли ăшă тумтир тума пĕр тир тата 400 грам çăм пачĕ.

Ку ялсоветне кĕрекен ытти колхозсенче те ăшă тумтирсем пухасси ăнăçлăн пулса пырать.

В. ЧЕРНОВ.

* * *

СЕНТĔР. Оринино ялсоветне кĕрекен «Аврора» колхоз членĕсем Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăри рабочисемпе работницăсем чĕнсе каланине ĕçпе ответлеççĕ. Чĕнӳ хаçат çине пичетленсе тухсанах, колхоз председателĕ А. Бондарев Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир тума пĕр чĕрĕ тир, пĕр килограмм çăм, колхоз счетоводчĕ И. Тучев пĕр чĕрĕ тир пачĕç.

— Эпир фронта куллен пулăшса пырсан çĕнтерӳ те часах пулĕ,—терĕç Куропаткина тата Сорокина колхозницăсем. Вĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли пĕр чĕрĕ тир, 300 грамм çăм, пĕр çĕлĕк пачĕç.

Мешаков Илья—9-мĕш класра вĕренет. Вăл кăçал çăвĕпех колхозра тăрăшса ĕçлерĕ. Боецсем валли вăл та пĕр чĕрĕ тир пачĕ. И. Яковлев, М. Кожевникова, Л. Петров, А. Максимов колхозниксем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тума тир, çăм, çĕлĕк, алшăлли пачĕç.

Çапла вара малтанхи кунах колхозра 22 тир, 12 килограмм çăм, 4 алшăш, 1 алшăлли тата ытти тĕрлĕрен япалисем пухăнчĕç. Боецсем валли ăшă тумтирсем пухасси сарăлсах пырать.

МИКИШ ПАВАЛĔ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 29-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

* * *

Совет Информаци Бюровĕн сентябрĕн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерĕвĕнче çыранри батарейăсемпе Хĕрлĕялавлă Балти флочĕн карапĕсем противникăн пĕр крейсерĕпе пĕр миноносецне путарни çинчен тата икĕ миноносеца сиенлени çинчен пĕлтернĕччĕ. Халĕ илнĕ сведенисем тăрăх çакă палла: противникăне пĕр миноносец мар, икĕ миноносец шыва путарнă. Нимĕçсен шыва путнă карапĕсем çинчен хăшпĕр даннăйсене пĕлтеретпĕр. Германин крейсерĕ 6 пин тонна водоизмещенияллĕ пулнă. Крейсер 150 миллиметрлă 9 орудипе, 14 зенитнăй тупăсемпе, 4 зенитнăй пулеметсемпе тата 12 торпеднăй аппаратсемпе хĕçпăшалланнă пулнă. Крейсер механизмĕсен хăвачĕ 65 пин лаша вăйĕ чухлĕ пулнă. Крейсер экипажĕ 571 çынран тăнă. Германин миноносецĕсем 800 тоннăна яхăн водоизмещенияллĕ пулнă. Кашни миноносецĕ 105 миллиметрлă виçĕ орудипе, 20 миллиметрлă икĕ орудипе тата 6 торпеднăй аппаратпа хĕçпăшалланнă пулнă. Миноносецсен механизмĕсен хăвачĕ 25 пинтер лаша вăйĕ чухлĕ пулнă. Карапсен экипажĕсенче 123-шер çын пулнă.

* * *

Днепропетровск облаçĕн оккупациленĕ районĕсенче юлнă совет патриочĕсем хăйсен хăюллă ĕçĕсемпе противникăн тылне дезорганизацилеççĕ, нимĕç войскисене пысăк сухатусем кӳреççĕ. Нумаях пулмасть Ж. юлташăн отрядĕнчи партизансен группи çĕрле фашистсен танкĕсем тăнă вырăна шуса пынă. Ихĕ танкĕн гусеницисем айне партизансем вăрттăн минăсем хунă та пытаннă. Тул çутăлас умĕн машинăсем выränтан тапрансан, взрыв пулнисем илтĕннĕ. Танксем стройран тухнă. Тепĕр кунне партизансен утлă группи фашистсенчен продовольстви тиенĕ икĕ обоза тата хирти почтăна туртса илнĕ.

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче каçхине пĕр юханшывăн хĕррине Германи пехотин роти пырса çитнĕ. Нимĕçсем юханшывăн тепĕр енне каçма васканнă, анчах кĕпере çĕмĕрнĕ пулнă. Вара совет патриочĕ Ш. юлташ нимĕçсен офицерĕ патне пынă та тепĕр кĕпер патне каяккан сула кăтартнă, вăл кĕпер 8 километрта пулнă. Унта пурăнакан ытти çынсенчен ыйтса тĕплĕнрех тĕлнĕ те, офицер хăйĕн ротине хăтартнă çулпа илсе кайнă. Çак вăхăтра советăн тепĕр патриочĕ Р. юлташ вăрттăн сукмаксемпе партизансен отрячĕн командирĕ патне юлануртпа вĕçтернĕ. Кĕпертен инçе мар выränта партизансен отрячĕ засада тунă. Нимĕçсен роти çывхарса пырсан, ун çине пулеметсемпе винтовкăсенчен пеме тытăннă. Хире-хирĕç пересси пуçланса кайнă, вăл тул çутăличченех пынă. Çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 20 çын ытла вилнĕ тата аманнă.

* * *

Италин 3-мĕш Берсальерски полкĕнчи 18-мĕш батальонри 2-мĕш ротăн салтакĕсем Фрал Северино тата Педро Марлини, пирĕн пĕр чаçа тытăкана парăнăскерсем, хăйсен ротинчи салтаксем патне çакăн пек çыру çырнă:

«Салтак юлташсем!

Эпир, тав турра, чĕрĕ те сывă-пурăнатпăр, вăрçă хыççăн хамăран Италине тавăрăнасса шанатпăр. Пирĕншĕн пулсан вăрçă пĕтрĕ. Эпир ĕçлеме каятпăр, хамăр пек рабочисемпе тата хресченсемпе пĕрле ĕçлĕпĕр.

Вырăссем тытăкана лекнисене асаплантараççĕ тата перче вĕлереççĕ тесе пире каланисем пурте суя. Çав элекпе уçă курса пире ухмаха ертнĕ, пире вылăхсем пекех вĕлерме хăваласçĕ.

Салтаксем! Эпир кунта курнисем пурте Хĕрлĕ Çăран, авиацин тата артиллерин вăйне кăтартса параççĕ.

Пĕтĕм халăх пулăшса пыракан вырăс салтакĕсем паттăрăн çапăçаççĕ, Вĕсене Англи халăхĕ тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен индустрийĕ пулăшса пыраççĕ.

Гитлера тата ăна сутăннă Италири руководительсене кăмăл туса, пире Хĕрлĕ Çăран снарячĕсемпе пульлисен айне вилме хăваласçĕ. Вырăс рабочийĕсемпе хресченĕсене хирĕç эпир мĕншĕн вăрçатпăр-ха? Пирĕн пурнăçсем пирĕн аннесемшĕн, аттесемшĕн, арăмсемпе ачасемшĕн кирлĕ, вĕсем пире сыввăн та чиперрĕн курасшăн.

Салтаксем! Пирĕнтен пример илĕр, хĕçпăшала пăрахăр та тытăкана парăнăр!

Фрал Северино тата Педро Марлини».

* * *

Продовольстви çитмен пирки хăйĕн нушисене мĕн чухлĕ тенулин витес тесе, Гитлер хăйĕн «союзникĕсене» пĕр вăтанмасăр çаратать. Италин ялхуçалăхлă районĕсенчен нумайĕшĕнчен нимĕçсем продовольствие пĕтĕмпе пекех илсе тухса кайнă. Итали халăхĕ выçă ларать. Çак кунсенче Гитлер Муссолинирен каллех тĕштырă пысăк хисеппе тăратма ыйтнă. Çакна май Италири министрсен совечĕ, Муссолини питех те çине тăнине пула, халăха карточкăсем тăрăх çăкăр пĕр çын пуçне кашни кун 200 грамм çеç памалла туса чакарнă. Итали халăхĕ выçлăхлă хĕл килессе питех те шикленсе кĕтет.

Сентябрĕн 30-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 30-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем пĕтĕм фронтра противника хирĕç çапăçнă.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн пĕр авиачасть сентябрĕн 27-мĕшĕнче, нимĕçсенне 10 танк, 38 бронемашина тата 98 автомобиль пĕтерсе тăкнă.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче çак чаçре летчиксем Борташевич, Корякин, Денисенко тата Костин юлташсем тăшман войскисен пысăк группировки, танксемпе тата артиллерипе каçакан пысăк кĕпере, инсе антарнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи участокĕсенчен пĕринче çапăçакан совет летчикĕсем, сентябрĕн 27-мĕшĕнче нимĕçсен нумай бомбардировщикĕсемпе истребителĕсем лараканн тăшман аэродромĕ çине ăнăçлăн, вĕçсе пырса тапăннă. Çапла пырса тапăннине пула фашистсенне 29 самолет пĕтернĕ, вĕсенчен 26 самолетне çĕр çинче тата 3 самолетне, сывлăшра пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн самолетсен группи нимĕçсенне пĕр кун, хушшинче 10 танк, 38 бронемашина, тăшман салтакĕсем ларса пыракан 10 автомашинăна тата пехотăн пĕр ротине яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн, Хĕвеланăç енчи участоксенчен пĕринче пулса иртнĕ çапăçура красноармеец Широкий штыкпа тăрса çапăçнă, чухне нимĕçсен пĕр офицерĕпе 5 салтакне чиксе пăрахнă тата граната ывăтса 2 автоматчика, пĕтерсе тăкнă. Широкий юлташăн хастарлăхне курса хавхаланнă, подразделени çав çапăçура фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна яхăн пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград патне пымалли çулсем çинче вĕлернĕ нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем сумĕнче, тупнă сырусем фашистла войскăсем Хĕвелтухăç фронтĕнче тăвакан калама çук пысăк сухатусем çинчен çирĕплетсе параççĕ. Ефрейтор Эрнст Реннунг сентябрĕн 12-мĕшĕнче хăйĕн тусĕ Вернер Штольт патне çапла çырнă: «Хаклă Вернер! Июлĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа эпĕ Российăра. Эпĕ çак вăхăтра курни-илтни çинчен сырса пама май çук. Эпĕ ялах малти линире пулнă... Çапăçăва 160 çынлă йышпа тухнă пирĕн ротăра 60 çын кăна юлчĕ. Батальонри çынсен шучĕ аран-аран пĕр рота чухлĕ пулать. 10-мĕш ротăра 33 çын юлчĕ. Пирĕн рота ĕнтĕ виççĕмĕш командира çитрĕ. Пирĕн дивизири офицерсене курне те пекех вĕлерсе пĕтернĕ. Дивизи хăйĕн салтакĕсен шучĕпе пĕр полк чухлĕ пулать, çакăнтан ĕнтĕ эпир йывăр çапăçусем витĕр тухнине эсĕ ăнăçах курма пултаратăн».

Ефрейтор Иосиф Шрейдер сентябрĕн 8-мĕшĕнче хăйĕн тăванĕсене çапла пĕлтернĕ: «...Эпир кунĕ-кунĕпех пылчăкра выртатпăр, çумăрçăр пуçне кунта урăх нимĕнех те çук. Çак вăхăтрах эпир пысăк сухатусем тӳсетпĕр».

Нимĕç пехотин пĕрремĕш дивизийĕн 1-мĕш полкри тыткăна парăннă унтерофицерĕ Артур Клейн, унăн ротинчи 193 салтакран 72 салтак кăна юлнă, тесе пĕлтернĕ. Çак полкри ытти ротăсем татах та йывăртарах сухатусем тунă.

* * *

Чехословаки патриочĕсем фашистла оккупантсене хирĕç кĕрешессине вăйлатсах пыраççĕ. Çар предприятийĕсенче чугунçулсем çинче саботажсемпе диверсисем шучĕ кунран-кун ӳссе пырать. Пильзенре Шкода завочĕсен сборочнăй цехĕсенчен пĕри виçĕ кун хушши ĕçлемен, мĕншĕн тесен, хăшпĕр детальсем юрăхсăр пулнă. Нумаях пулмасть çак заводра патриотсем хатĕр продукци хунă склада вут тĕртсе çунтарса янă. Çакăнта нумай хĕçпăшал пĕтнĕ. Пршеров тата Границе станцийĕсем хушшинче тĕрлĕрен çар снарячĕсемпе танксем тиенĕ çар поезчĕ пысăк крушени тӳснĕ. Крушели пулнипе 13 вагон арканса кайнă, 19 танка вăйлă сиенленĕ. Иккĕмĕш крушени Пльзен — Непомук линийĕ çинче пулнă. Непомук хулинчен темиçе километрта Германи çарĕ валли орудисем тиенĕ 15 платформа тăвайккинелле вăркăнса кайнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар часĕсем Кишиневран тухса кайнă хыççăн румынсем хулара тискер аркату туса ирттернĕ. Мĕнпур магазинсене, учрежденисене тата хваттерсене çаратса пĕтернĕ, çĕршер çынсене тĕрмесене хупнă тата пере-пере вĕлернĕ. Румыни çарĕн нумаях пулмасть тытăкана илнĕ офицерĕ Иона Штефанеску çапла каласа панă: «Пирĕн часть. Кишинева унтан Хĕрлĕ Çар тухса кайсан иккĕмĕш кунĕнче пырса кĕнĕ. Нимĕçсем сигуранцăна хулари мĕнпур совет çыннисене тĕрмесене хăваласа хупма приказ панă. Унччен НКВД йышăнса тăнă çуртра каçсерен вĕçĕмрен пăшал персе тăнисем тата пулеметран пенисем илтĕннĕ. Çакă вăл — сигуранца Кишинев çыннисене пере-пере вĕлерни пулнă». Румынин чикĕри 5-мĕш полкĕнчи, 3-мĕш батальонри, 11-мĕш ротăри ефрейтор Дмитру Филипеску çапла пĕлтернĕ: «Кишинева эпĕ Хĕрлĕ Çар часĕсем çаксăнтан тухса кайсанах пырса кĕнĕ. Сигуранца агенчĕсем хулари çынсене арестлеме тытăнчĕç. Нумайĕшне çĕрле пере-пере пăрахнă, пурлăхĕсене вара хăйсем туртса илнĕ. Пирĕн рота караулра тăнă пулнă. Итали консульствин картишĕнче пулеметран персе хĕрарăсемпе арçынсене 50 çын ытла вĕлернине эпĕ хам куçпах курнă».

Румыни сигуранци Кишиневра хăйĕн тискер преступленийĕсене уйăх çурă хушши туса пырать. Мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарни çинчен калакан сведенисене Румынире кăна мар, Румыни тулашĕнче те анланă пĕлсе тăраççĕ. Çакна пула шикленсе ӳкнĕ Румынири власçсем, хăйсем тунă преступленисене большевиксем çумне çыпăçтарса, айăпа хăйсем çинчен урăххисем çине тӳнтерме шут тытнă. Çак шутпа сигуранца «Универсул» хаçатра: Итали консульстви тата НКВД çурчĕ пулнă подвалсенче «интеллигентсен, священниксемпе айăпсăр ачасен», большевиксем вĕлернĕ текенскерсен, 160 виллине тупнă тесе, пĕлтерӳ пама хушнă.

Пуринпĕн те паллă, гитлерла бандитсем Каунаса, Львова тата ытти хуласене тытса илнĕ чухне пиншер совет граждăнĕсене пере-пере пăрахса, çавăн пекех хăйсен тискер ĕçĕсене совет власĕсем çумне çыпăçтарма хăтланнă. Гитлерăн Румынири тарçисем тăкăрлатнă çулпа пыраççĕ. Анчах вĕсем темĕнле тăрăпсан та, хăйсен юнлă ĕçĕсен йĕрĕсене шăлса пытараймĕç.

СССР, Великобритани тата США представителĕсен канашлăвĕ уçăлнă

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче Мускав хулинче СССР, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен представителĕсен канашлăвĕ уçăлнă. Канашлу пуçламĕшĕнче Делегацисен пуçлăхĕсем — В. М. Молотов юлташ, лорд Бивербрук тата г-н Гарриман саламлă кĕске сăмахсем калаçнă. Вăл сăмахсенче Совет Союзĕ, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем гитлерла Германие хирĕç кĕрешес ĕçре пĕтĕмпех пĕр кăмăллă тата çирĕп шухăшлă пулни палăрнă.

Канашлу малашнехи ĕçĕн кун йĕркине çирĕплетнĕ тата чылай комиссисем тунă, вĕсем çийĕнчех хăйсен ĕçне тума тытăннă.

СССР Совнаркомĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ лорд Бивербрука тата г-н Гарримана йышăнни

Сентябрĕн 29-мĕшĕнче И. В. Сталин юлташ лорд Бивербрукпа—ССР Союзĕн, Великобританин тата США-н Мускавра канашлăвĕнчи Англи Делегацин Председателĕпе тата г-н Гарриманпа—Америка Делегацин Председателĕпе иккĕмĕш хут калаçнă.

Калаçура Совет Делегацин Председателĕ В. М. Молотов юлташ тата канашлури Совет Делегацин членĕ М. М. Литвинов юлташ пулнă.

Германири вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 29-мĕш. (ТАСС). Германирен нумай пулмасть тарса килнĕ çынсем вăрçă пирки халăх çине ӳкнĕ йывăрлăхсем Германи халăхне тарăхтарса пыни çинчен пĕлтереççĕ.

Вестфельри пĕр хулара выльăх-чĕрлĕх промышленникĕ пулнă çын, юлашки вăхăтра пирус хучĕн фабрикинче ĕçленĕскер, рабочисем хушшинче вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăлсем вăйли çинчен пĕлтернĕ. Совет Союзĕ çĕнтерессине халăхи вăхăтра нумайĕшĕ хĕрӳллĕн шанса тăраççĕ. Пурте выçăхаççĕ. Халăх тир вырăнне усă курса урăх япаласенчен çĕленĕ ура тумĕсем тăхăнса çӳрет. Августăн пуçламĕшĕнче Эссенрен килнĕ пĕр юрист çапла пĕлтерет: Эссен районĕнче пысăк йĕркесĕрлĕхсем палăраççĕ. Какайпа çу парса тăма ытла та пĕчĕк нормăсем туса хунă. Еврейсем ху нормăна та илеймеççĕ. Тумтирсене никама та сутмаççĕ. Фронтра вилнĕ салтаксен ултă хушаматне кăна куллен пичетлесе каларма Эссенри хаçатсене официаллă приказ пани халăха вăйлăн шиклентерет, халăх вилнĕ салтаксен списокĕ вăрăмрах пулнине пĕлсе тăрать. Нимĕçсен совет фронтĕнчи сухатăвĕсем 3 миллион çын пулни çинчен калакан сăмахсем хаяр цензурăна пăхмасăрах, халăх хушшинче сарăлаççĕ.

Пётём тёнчери çамрăксене

КАЧЧĂСЕМПЕ ХЁРСЕМ, ПИРЁН ТАНТĂШСЕМ!

АНГЛИРИ ТАТА АМЕРИКĂРИ ÇАМРĂКСЕМ!

ФРАНЦИРИ, ПОЛЬШĂРИ, ЧЕХОСЛОВАКИРИ, ЮГОСЛАВИРИ, БЕЛЬГИРИ, НОРВЕГИРИ, ГОЛЛАНДИРИ, ГРЕЦИРИ ÇАМРĂКСЕМ!

ПЁТЁМ ТЁНЧЕРИ ÇАМРĂК ĂРУ!

Совет çамрăкёсен ячёпе эпир сире, кам мёнле халăхран тухнине пăхмасăр, кам мёнле чурлăх тытса тăнине пăхмасăр, тёнпе политика тёлёнчен каман мёнле ăнлану пулнине пăхмасăр, чёнсе калатпăр—эпир сире, хамăрăн тантăшсене.

Пирён умма, çамрăк ăру умне, вилёмле хăрушлăх тухса тăчё. Мёнпур çёрте вилёмпе ишёлтерӳ саракан фашистла тискер-кайăксем пирён ирёклёхпе телее, пирён çамрăк пурнăçа пётерсе лартма хапсăнаççё. Икё уралла тискер-кайăк Гитлер Чехословакине чуралантарса çаратса пётерчё, Польшăна çаратса пушатрё, Норвегипе Югославине туртса татканё, Франци уйхирёсене таптаса лӳчёркерё, Греци хулисене сунтарса ячё. Вăл хăйён бандине самолетсем çине лартса Англин мирлё хулисем çине бомбăсем пăрахма ячё. Халё Гитлер юншăн çăткăнланса ăсран кайнă бандитсен пысăк çарне пирён тăван çёршывăн аслă çёрёсем çине хăваласа килчё.

Гитлерла пусмăрçăсем тунă юнла ирсёр ёсен списокё кунран-кун ӳссе пырать. Кунран-кун ӳсет пёр айăпсăр асаплантарса вёлернё хёрарăмсен, ачасен, стариксен, чирлисен шучё.

Гитлер оккупациленё çёршывсенчи çамрăксем, итлёр пире!

Сирён тăван çёршыв пулнă. Юнлă фашизм килчё те ăна туртса илчё. Сирён ирёклёх пулнă. Гитлерла бандитсем ăна туртса илчёç те сире чура туса хучёç.

Сирён хăварăн нациллё культура — сирён ăçусемпе аслаçусем ёмёрсем хушшинче çитёнтерсе пынă культура пулнă. Гитлерла варварсем ăна таптаса аркатрёç.

Сирён хăварăн пурăнмалли çуртйёрсем пулнă. Фашистсем вёсене çаратса, çунтарса пётерчёç. Сирён хăварăн çемьесем пулнă. Гитлер вёсене ишёлтерсе пётерчё—пёрисене пере, теприсене асаплантарса вёлерчё, виççёмёшсенчен чурасем турё, тăваттăмёшсене ирсёррён мăшкăлласа чыссăлатрё.

Сирён çамрăк çынсене тивёçлё пысăк та сутă ёмётсем пулнă. Фашизм усал çил-тăвăл пек пырса тапăнчё те, çав ёмётсене таптаса ишёлтерчё.

Германи фашизмё мёнпур тёнчери çамрăксем валли те çавăн пек чурлăх шăпинех хатёрлет.

Пирён ирёклёхе юратакан тăван çёршыв çине Гитлер ултавлăн килсе тапăнчё. Пирён нумай миллионлă халăхран вăл чура туса хума хапсăнать. Анчах çакă вăл нихçан та пулаймё! Тăван çёршыва хӳтлеме пирён мёнпур халăх, мёнпур совет çамрăкёсем çёкленчёç.

Вирё уйăх хушшинчи хаяр çапăçусенче пирён Хёрлё Çарпа Тинёс-Çар Флочё, çамрăк совет воинёсем—лётчиксем, танкистсем, артиллеристсем, пехотинецсем, хёрсем-медсестрасем хăйён чыслăхёпе ирёклёхне тата хăйён никама пăхăнманлăхне хӳтлекен халăх мён туми пултарнине кăтартса пачёç. Гитлерăн «çиçёмле вăрçă» планёсем арканса кайрёç. Çак вăрçă вăраха тăсăлакан тата пысăк чăтăмлăх ыйтакан вăрçă пуласси халё ёнтё пуриншён те палла. Çак вăрçă вăл фашистла Германин вăйёсене хавшатса пётерет, Германие арканса каясси патне илсе ситерет.

ПЁТЁМ ТЁНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕМ!

Фашизм—пирён вилёмле тăшман.

Пирён халё пурин те пёр задача — фашизма çапса çёмёресси.

Фашизма çапса çёмёрни кăна мёнпур халăхсене тулли кăкăрпа ирёклёх сывлама, харпăрхăй государствине культурине туса аталантарса пыма май парать.

Гитлеризма пётерсе тăкмалла, ăна пётерсе тăкатпăрах.

Çёнтерӳ пиртен хамăртан килёт. Çёнтерёве пирён хамăран алăпа туптамалла. Хамăран мёнпур вăйсене пёрлештермелле, пёрлёхлё çирёплёхпе, пёрлёхлё шухăш-кăмăлпа чёререн пётёссе тăмалла, мирлё вăхăтри шухăшкăмăлсене, харпăрхăйшён кăна тăрăссине, иккёмёш вырăнти яталасене сирсе ямалла, тăпмана хирёç хăюллăн та пёр шикленмесёр çапăçăва хаймалла.

Пирён ăру çёнтерӳ тăвакан ăру пулмалла, вăл çапла пулать те.

Эпир ирёклёхе, цивилизацине, прогреса варвăрстваран, пусмăрлăхпа тискерлёхрен хӳтлекен хамăр воинсен ячёсене çӳле çёклесе мăнаçлăн малалла илсе кайăлăр.

Пёр вёçёнчен пуçласа тепёр вёçне çитти мёнпур тёнчипе çамрăк патриотсен хăватлă чёнёвё лиратăр—пурте гитлерла Германине çапса аркатма!

СОВЕТ ÇАМРĂКЁСЕМ!

Пирён тăван çёршыв хăрушлăх умёнче тăрать. Хамăр халăхăн чыслăхёпе никама пăхăнманлăхёшён, мёнпур прогрессивлă этемлёх ёçёшён çапăçăва чи малтан эпир, çамрăксем, хаймасан хамăн каймалла тата? Мёнпур вăй-хăвата, мёнпур шухăш-кăмăлсемпе ӗмётсене çёнтерӳ тăвас ёçе парар! Хамăран çёнтерӳшён вилёмрен хăрамасăр кёрешсе, тăпмана пирён çапса çёмёрмеллех, аркатмаллах. Пурте хёçпăлăл тытăр! Хёрлё Çара çёнё боевой резервсем парар. Çёнтерӳ тума мён кирлине пурне те фронта парар.

АНГЛИН ХĂЮЛЛĂ ТА ПАТТĂР ÇАМРĂКЁСЕМ!

Эпир сирён вăйлă кёрешӳрен тёлёнсе савăнатпăр. Пирён туслăх çапăçусен вутёнче туптанать, çав туслăх мёнпур этемлёхён пёр-пётёмёшлё ёçёшён кёрешсе тăкăннă юпа—Англипе Совет Союз ывăлёсен юнёпе пётёссе çирёпленнё.

Фашистла Германия икё фронтлă вăрçăран яланах хăранă. Халё ёнтё вăл çавăн пек вăрçăпа тёлпулчё. Фашистла войскăсем килсе çапнин тёп ывăрлăхне Хёрлё Çар хăй çине илчё, çакăнпа вара вăл Англи халăхне унăн кёрешёвёнче пулăшу пачё. Фашистла йытётёвёсене Хёвелтухăç фронтёнче мён чухлё хăвăртрах çапса аркататпăр, Англи халăхё те çавăн чухлё хăвăртрах çёнтерӳ тума пултарё.

Тăшмана Хёвеланăçёнче те, Хёвелтухăçёнче те пурте пёрле тăрса ытларах та ытларах ӳссе пыракан хăватпа пыра-пыра çапар!

Хамăран çарсем валли хёçпăлăл тăвас ёçе вăйлатар!

Самолетсемпе танксем ытларах туса кăларар!

Алла-аллăн тăрса кёрешсе, мёнпур йывăрлăхсемпе чăрмавсем урлă каçса эпир хамăран татăклă тёллев патне çитёпёр—фашизма çёнтерёпёр.

АМЕРИКĂРИ ÇАМРĂКСЕМ!

Гитлеризма хирёç кёрешни—вăл Америкăри халăхсен ирёклёхёшён тата никама пăхăнманлăхёшён кёрешни пулса тăрать.

Гитлеризм пурăннă чухне Америкăри çамрăксен мирлё пурнăç пулассине кётмелли те çук. Океан—стена мар, океан—хӳтлёх мар, океан вăл—çул. Фашистла провокаторсем паян мирлё пурнăç пама пулаççё те ыран вара Лондон, Варшава, Белград, Мускав, Ленинград хулисем çине бомбăсем пырапыра пăрахнă пекех, Нью-Йорк çине те ултавлăн пырса тапăнса бомбăсем пăрахма пуçлаççё.

Ылханлă фашизма хирёç çапăçакан геройла çăрсем валли хёçпăлăл, медикаментсем, ăнă тумтирсем ытларах парăр!

Совет Союзёпе Англири çамрăксене кёрешӳре пулăшса пырăр!

Оккупациленё çёршывсенчи çамрăксене вёсен хăйсен нациллё никама пăхăнманлăхёпе ирёклёхёшён пыракан кёрешӳре пулăшса пырăр!

Юнлă фашизма çёнтермелли ялавă çӳлерех çёкёр!

ФАШИЗМ ОККУПАЦИЛЕНЁ ÇЁРШЫВСЕНЧИ ÇАМРĂКСЕМ!

Çапăçури хаклă тăвансем! Эсир захватчика хирёç паттăррăн тăрса кёрешни пире савăнтарать. Пёлсе тăрăр, хăварăн кёрешӳре эсир пёччен мар. Сирёнпе пёрле тёнчери ирёклёхе юратакан мёнпур çамрăксем.

Фашистсене пурăнма май ан парăр, вёсене кашни утăмрах сăтăрласа пырăр, складсене, чугунçулсене взрывсем туса аркатăр, сыхăнăва тата-тата пётерёр, оборудованисене пăсăр. Тăпманăн çар промышленноçне пур майсемпе те çёмёрсе аркатса пырăр!

Партизансен речёсене ӳстерёр! Пусмăрçăсене хирёç хаяр та таса тавăру çулăмне чёртсе хăватлантарса пырăр.

ÇАМРĂК БОЛГАРСЕМ!

Халё сирён кунçулăр пирки ёç татăлать. Фашизм сирён çёршыва сёкёнсе кёчё те сире хуçа пулса туртклама тытăнчё. Хăвăра тăванлă вырăс халăхне хирёç вăрă-хурăла вăрçа туртса кёртме ирёк ан парăр. Славян халăхёсен фашизма хирёç пыракан кёрешёвне хутшăнăр!

МЁНПУР ÇЁРШЫВСЕНЧИ СТУДЕНТСЕМ!

Студенчество яланах харпăрхăй халăхёсен ирёклёхёпе никама пăхăнманлăхёшён кёрешекен прогрессивлă хăватлă вăй пулса тăнă.

Апла пулсан историллё çапăçу кунёсенче кашни университет тăван çёршывшăн пыракан тёрёслёхлё таса кёрешёвён хăватлă вучахё пулса тăтăр! Кашни студент, вăл кирек ăçта пулсассăн та, хăй халăхён ёçёшён хастаррăн кёрешекен паттăр пултăр. Малаллă, çапăçăва!

Хăвăр хыççăн мёнпур çамрăксене ертсе кайăр!

МЁНПУР ÇЁРШЫВСЕНЧИ ÇАМРĂК ПАТРИОТКĂСЕМ!

Гитлеризм Германи хёрарăмёнчен мăшкăлласа пётерчё. Оккупациленё çёршывсенчи хёрарăмсенчен Гитлер пурне те туртса илчё—ирёклёхе, тăванёсене, савнă çыннисене, çемье йăвисене. Чура шăпи—акă мён хатёрлет гитлеризм тёнчери мёнпур хёрарăмсем валли.

Оккупациленё çёршывсенчи хёрсем! Хăвăртан, хăварăн аппу-йăмăкусемпе аннӳсенчен мăшкăлланăшăн гитлерла разбойниксене тавăрăр! Хăварăн асӳсене, тăванăрсене, савнă çыннăрсене фашистла тыткăнран каялла тавăрса пама ыйтăр! Фашистла çаратусене хирёç тăрăр, продовольствине пытарăр!

Çамрăк патриоткăсем! Фашизма хирёç—хёрарăмсен чи тискер тăшманне хирёç кёрешёве çёкленёр!

ФИНЛЯНДИРИ, РУМЫНИРИ, ВЕНГРИРИ ÇАМРĂКСЕМ!

Сирён халăхсене сутакан маннергеймсем, антонескусем, хортисем, фашистсене сутăнăскерсем, сире Германи фашизмён интересёсемшён çапăçма вăрçа чиркёç. Çамрăк финсем, румынсем, венгерсем вуншар та вуншар шинён вăрçă çулăмёнче шётрёç те ăнтё. Çавăн пек шăпах ытти нумай çамрăксене те кётсе тăрать.

Гитлер сирён çёршывсене пёр хёрхенмесёр çаратать, вёсен наци тёлёшёнчен никама пăхăнманлăхне пётерет.

Гитлерла ирсёрсемпе сирён пёр çул мар. Сирён вырăн—фашизма хирёç кёрешекен çамрăксен ретёнче.

ГЕРМАНИРИ ÇАМРĂКСЕМ!

Ачасемпе хёрарăмсен тата стариксен куççулёсемпе юнёсем сан çине нихăçан çуса тасалми намăс пулса витёнчёç. Германи çамрăкёсем нихăçан та çакăн пек—Гитлер хушшипе тунă пек тискер преступленисем туман. Çав преступленисене тума пăрахиччен сирён шăпу—ылхав та вилём кăна пулса тăрать.

Гитлерăн ăссăр идейисене пула миллионшар нимёç салтакёсем пётрёç те ёнтё. Çынвёлерен Гитлер власрах юлсан, Германине умра мён кётсе тăрассине ăнланмастăр-и вара эсир?

Юнлă Гитлерпа унăн шайккине хирёç пыракан кёрешӳ çулё çине тăрсан кăна эсир хăвăра валли çăлăнăç тупма пултаратăр.

ТЁНЧЕРИ ÇАМРĂКСЕМ!

Ирёклёхе юратакан, никама пăхăнса тăман çёршывсенчи халăхсен вăйёсем хисепсёр пысăк. Кёрешёве мёнпур çёрте миллионшар çамрăксем хутшăнаççё. Кёрешӳ çулăмёнче çамрăксен патриотла пёрлёхлё фронтё пулса пырать.

Эпир тёнчери мёнпур çамрăксене чёнетпёр: кёрешёвён пёрлёхлё фронтне çирёплетсе пырăр, гитлеризма хирёç хăюллăн кёрешекен паттăрсен речёсене ӳстерсе пырăр. Провокаторсене, гитлерла фашизмăн ылханлă атенчёсемпе тарçийёсене хăварăн ретсенчен хăваласа кăларăр.

Çапăçăва! Гитлеризма хирёç татăклă та тёрёслёхлё таса кёрешёве!

Фашизма çапса аркататпăр!

Çёнтерӳ пирён алăра пулать!

Евгений Фёдоров — Совет Союзён Геройё, географи наукисен докторё; **Василий Кульбакин**—Хёрлё ялавлă Балтфлотри подводнăй лодкăн командирё; **Кирилл Чирков** — «Серп и молот» заводри мастер-сталевар; **Клавдия Копненкова** — Раменск МТС-чи комбайнерка—стахановка; **Иван Прошин**—танкист, Совет Союзён Геройё; **Велимир Блахович**—Югославири çамрăксенчен; **Орест Шевцов**—МГУ студенчё, истребительнăй батальонри боец; **Анна Стародумова**—Ленински чугунçул çинчи Сортировочная депори паровозăн машинисчё; **Рубен Руис Ибаррури**—лейтенант; **Зоя Фёдорова**—киноартистка, Сталинла преми лауреачё; **Николай Михайлов**—ВЛКСМ Центральный Комитечён секретарё; **Владимир**—партизан; **Ганс Мале**—нимёçсен фашизма хирёсле çамрăкёсенчен; **Виктор Талалихин**—летчик, Совет Союзён Геройё; **Валентин Кутырев**—Çурçёр флотёнчи старший лейтенант; **Вано Мурадели**—композитор; **Серафим Знаменский**—спортăн тава тивёçлё мастерё, çар врачё; **Ольга Лепешинская**—ССР Союзён пысăк театрёнчи артистка; **Эмиль Гилельс**—пианист, пианистсен пётём тёнчери конкурсён лауреачё; **Алексей Ткаченко**—красноармеец-артиллерист; **Екатерина Новикова** — медсестра; **Михаил Гребенников**—педагог; **Татьяна Фрунзе**—граждăн вăрçи геройён хёрё, иккёмёш рангри çар техникё; **Зиновий Чуханов**—Наукăсен Академийён член-корреспонденчё; **Анна Ряхина**—врач; **Сергей Якунин**—«Красный пролетарий» заводри слесарь-стахановец; **Сергей Соболев**—академик, Сталинла преми лауреачё; **Ермакова**—«Парижская Коммуна» фабрикăри работница-стахановка; **Филиппева**—«Станконормаль» заводри стахановка-двухсотница; **Алексей Яшин**—МИИТ студенчё; **Николай Темелев**—лейтенант, Совет Союзён Геройё; **Виктор Литвинов**—Сталин ячёпе тăракан 1-мёш №-лё заводри главнăй инженер; **Мильчаков**—архитектор; **Клавдия Дергачева**—Центральнăй универмагри продавец; **Роза Тамаркина**—пианистсен пётём тёнчери конкурсён лауреачё; **Тамара Кириллова**—Трехгорная мануфактура фабрикăри ткачиха-стахановка; **Анна Маршак**—медицинăн пёрремёш институтёнче вёренекен студентка; **Александра Дьякова**—«Компрессор» заводри профсоюз комитечён председателё; **Федор Мазнюк**—сержант-связист; **Иосиф Маковский**—танкист, Совет Союзён Геройё; **Николай Красильников**—8-мёш №-лё заводри токарь-стахановец; **Александра Калистратова**—«Красная оборона» фабрикăри МПВО штабён начальникё; **Егоренкова**—партизанка; **Василий Вакач**—летчик; **Федор Еремеев**—512-мёш заводри стахановец; **Глеб Иванов**—кёçён сержант, артиллерист; **Николай Енин**—красноармеец-артиллерист; **Евгений Духавин**—лейтенант; **Вера Тришкина**—Войков ячёпе тăракан заводри стержневой отделенин бригадирё; **Хилько**—красноармеец-артиллерист; **Золтан Вайнвергер**—Вентри çамрăкёсенчен; **Анатолий Пегов**—ВЛКСМ Мускав Комитечён секретарё; **Татьяна Федорова**—Метрострой инженерё; **Георгий Надольный** —Хура тинёс флотёнчи 2-мёш статьяри старшина.

Паян халăха çар ёçне вёрентес ёç пуçланать

Пысăк хастарлăхпа вёренме пулаççё

ÇЕМЁРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Оборонăн Государственный Комитечё ССР Союзён граждăнёсене пурне те обязательнăй йёркепе çар ёçне вёрентесси çинчен йышăннă постановленине районри ёççыннисем халăл туса кётсе илчёç. Рабочисемпе колхозниксем хашнех çар ёçне пысăк хастарлăхпа вёренсе пыма хатёрри çинчен шантараççё.

— Эпир Оборонăн Государственный Комитечё йышăннă постановленине чёререн ырлатпăр. Çёршыв умне хăрушлăх тухса тăнă вăхăтра хёçпăлăл тытма пултаракан кашни çынăн тăпмана хирёç çапăçăва тухма хатёр тăмалла. Эпир пурте, пёр çын пек пулса, çар ёçне вёренме занятисене йёркеллён çӳреме, отличнă вёренсе пыма пулăпăр,—теççё станцинче ёçлекенсем.

— Эпё Хёрлё Çар ретёнче пулман. Анчах хёçпăлăл тытса гитлерла бандитсене хирёç çапăçма хатёр. Çар ёçне пысăк хастарлăхпа вёренме пулатăп,—тенё древкомбинатри 1-мёш номерлё цехри стахановец Алексеев юлташ.

«Большевик» заводри рабочисем те Оборонăн Государственный Комитечё ёççыннисене çар ёçне вёрентесси çинчен йышăннă постановленине пуллăн кăмăллă ырлаççё. Паянхи куна кунта çар ёçне вёренме çӳрекенсен списокёсене туса хатёрленё, занятисем ирттерме ятарласах 6 пӳлём уйăрнă.

Хатёрленсе çитнё

КОМСОМОЛЬСКОЕ, сентябрён 30-мёш. (Телефонпа). Районри колхозсемпе учрежденисенче пулса иртнё пухусенче ёççыннисем Оборонăн Государственный Комитечё Совет Союзёнчи граждăнсенз пурне те обязательнăй йёркепе çар ёçне вёрентесси çинчен йышăннă постановленине ырлаççё тата саламлаççё.

Сентябрён 26-мёшёнче райсовет исполкомён ларăвёнче районра ёççыннисене çар ёçне вёрентессине организацилесси çинчен ятарласа ыйту лартса сӳтсе-явнă. Ку тёлёппе 5 ялта вёренӳ пункчёсем тума йышăннă. Халь вёренмелли çуртсене тупса йёркене кёртсе ситернё те ёнтё. Вёренӳ хатёрёсене, учебниксене, наставленисене, уставсене учета илсе хунă. Ыйтăçран гранатăсемпе винтовкăсене кирлё таран тума мастерскойсене заказ панă. Çар ёçне вёренме тивёç çынсене шута илсе тухса списоксем тунă. Вёренӳ подразделенийёсем валли командирсемпе политработниксем кирлё таранах уйăрнă. Сăмахран, Хирти Сёнтёр ялёнчи вёренӳ пункчён начальникё пулма запасра тăракан командира Кипечри вăтам шкула вёрентекен военрука Наумов юлташа çирёплетнё. Çавăн пекех Аслă Чурачăкри вёренӳ пункчён начальникё пулма граждăн вăрçин участникне Садыков юлташа çирёплетнё. Политрук-сем пулма коммунист-учительсене тата комсомолец-учительсене уйăрнă. Командирсемпе политработниксем сентябрён 30-мёшёнче 5 кунлăх курсран вёренсе тухрёç.

Ыран пур вёренӳ пункчёсенче те занятисем расписанисем тăрăх йёркеллё пуçланаççё.

Ф. АРХИПОВ.

Командирсемпе политработниксен семинарё

КАНАШ. Сентябрён 26-мёшпе октябрён 1-мёш хушшинче çар ёçне вёрентекен командирсемпе политработниксен районри семинарё пулса иртрё. Семинарта 69 çын пулчёç. Вёсем уйрăм подразделенисенче çар ёçне мёнле вёрентмеллипе паллашрёç. Вăрçăра мён кирлё — çавна, вăрçăра мёнле тăваççё—çапла вёрентмелле.

Семинар занятийёсене командирсемпе политработниксем производствăран уйăрăлмасăр çӳрерёç. Занятисем кашни кун тăваттăр сехет пулса пычёç. Занятисенче винтовкăна, пулемета, миномета тата ручной гранатăна, химиллё тапăнуран хӳтёленес ёçе, окоп чавассипе маскировка тăвассине, çавăн пекех уйрăм боец тата отделени наступленине мёнле каймаллине, разведкăна каяссине, тăпманран сыхланас ёçе вёренчёç.

Занятисене районри çарёç комиссариачён инструкторёсем—запасри старший лейтенант А. П. Рыбников юлташ ирттерчё.

Занятисем лайăх хатёрленнипе, çирёп дисциплина пулнипе, пысăк интереспе ирттёç,—терё, вёсене хак парса, районри çарёç комиссарё батальоннăй комиссар Макаров юлташ.

Семинар хушăнас умён командирсемпе подразделенисенче çар ёçне вёрентме винтовкăсем, гранатăсем, наставленисемпе уставсем пачёç.

Т. ИВАНОВ.

Америка çамрăкёсем фашизма хирёçле Мускаври митинга саламлани

НЬЮ-ИОРК, сентябрён 29-мёш. (ТАСС). «Совет Союзёпе отношенисем тытса пырас ыйтусемпе ёçлекен «Америка советчё» фашизма хирёçле Мускаври митинга янă çакăн пек саламсем илнё:

«ÇАМРĂКСЕН ТĂВАНЛĂХЁ» ЯТЛĂ ОБЩЕСТВăН ПРЕДСЕДАТЕЛЁ СОЛ ВЕЙЛ ЯНĂ САЛАМ

Чылайёшён тăван çёршывне Гитлер йыткётёвёсем çёмёрсе тăкнă 14 халăхăн представителёсене пёрлештерсе тăракан «Çамрăксен тăванлăхё» ятлă обществăран хёрӳллё салам. Эсир варварла фашизмран, унăн юнлă ёçёсенчен, террортан, вăрçăран, чухăнлăхран, телейсёрлёхрен тата çёмёрнинчен пётём тёнчене ирёке кăларма хёрӳллён чённипе тата эсир мён пур вăя хурса кёрешнипе эпир савăнса хумханатпăр. Пирён организацине çыхăнса тăракан тёрлё национальноçсен çамрăкёсем сирён çарлака союза кёрекен нацисене пёрлештерес тата вёсен хăрушсăрлăхне пурнăçа кёртес ёçе сирён çёршыв питех те пысăк вклад хунине пысăкран хаклаççё. Сирён кёрешӳ пурнăçшăн мёнле пысăк вырăн йышăннине эпир ăнланатпăр. Çак вăл—пётём этемлёхе хӳтлессишён пыракан кёрешӳ. Эпир сире тёрекленё пулăпса тăрăпăр. Гитлеризма çёмёрсе, пётерсе тăкма сире кирлё тёрлёрен материалсене тапăнсыпписёр ярса тăмалла туса хурăпăр.

Гитлеризма пётерсе тăкас ёçе пулăшу парса тăрассишён эпир пётём Америка çамрăкёсен пёрлёхне ăлăсене канăç памасăр туптаса пыма тăрăшатпăр. Сирён аслă çулпуç: «Çёнтерӳ пирёнтех пулё» тенине эпир тепёр хут калатпăр, вăл пирён лозунг та, сирён лозунг та пулса тăрать. Сирё чи хёрӳ те, чи туслă саламсем яратпăр.

ЛИТВАН АМЕРИКĂРА ПУРĂНАКАН ÇАМРĂК РАБОЧИЙЁСЕН ОРГАНИЗАЦИН ПРЕДСЕДАТЕЛЁ ОРМАН ЯНĂ САЛАМ

Литван Америкăра пурăнакан çамрăкёсен пётём тёнчери çамрăксемпе пёрле ССР Союзён хăюллă та геройла çамрăкёсене пётём чёререн саламлать. Эпир сире, этемлёх ирёклёхёшён, пыракан кёрешӳн геройёсен ятне илме тивёçлёскерсене, хамăр сирёнпе пулнине пёлтеретпёр. Çёнтерме сире пулăшу парассишён эпир кунта мёнле, кăна май килнё таран пурне те туса пыратпăр. Эпир сирён çине, пире пурнăç парассишён хăвăр пурнăçа параканскем çине, хамăр шанчăксене хуратпăр. Эсир çёнтерессине эпир çирёпшён шанса тăратпăр. Пуласлăх çамрăксен аллинче пулмалла. Эсир, хăюллă паттăр çынсем, паян малаллăха татса паратăр. Сывă пулччăр совет çамрăкёсем! Этемлёхшён пыракан кёрешӳ сывă пултăр! Çёнтерӳшён, ирёклёхшён — малалла!

Чехословакире чрезвычайнăй положени туса хунă

ЛОНДОН, сентябрён 29-мёш. (ТАСС). Лондонри радио пёлтернё тăрăх, çёнё протектор Прагăна килнё майпа çёнёрен массăллă арестсем пулса иртнё. Унччен пысăк вырăнсем йышăнса тăнă чылай çынсене арестленё, халё вёсене государствăна измена тунă тесе айăплаççё. Нейрата та çакăн пекех шăпа кётет тесе калама сăлтавсем пур.

* * *

НЬЮ-ИОРК, сентябрён 29-мёш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчё пёлтернё тăрăх, «Германине хирёçле активлă ёçсем» пулнине кура Чехире тата Моравире чрезвычайнăй положени туса хуни çинчен калакан сведенисене унта официаллă йёркепе çирёплетнё.

Ассошиэйтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчё пёлтернё тăрăх, Чехин премьер-министрне Элиаша «государствăна измена тунă» тесе айăпласа арестленё. Чрезвычайнăй положени çинчен калакан закона Чехипе Моравин 5 районё çине сарнă.

* * *

ЖЕНЕВА, сентябрён 29-мёш. (ТАСС). Словакин шалти лару-тăрувё сивёчленсе пыни çинчен кунта сведенисем илнё. Юлашки вăхăтра диверсиллё актсем тата Германине хирёçле выступленисем питех те хăвăрт ӳссе кайнă. Германин информаци бюровё Словакин министрсен совечё саботажла актсемшён асаплантарса вёлермелли закон йышăнни çинчен пёлтернё. Анчах та çакă Словаки халăхне татах та хытăрах хирёç тăратнă. Германин «Динамит Нобель» фирмин аллинче тăракан çар предприятийёсен пёр цехёнче вăйлă взрыв пулнă, çав взрыв чылаях çёмёрсе тăкнă. Çавăн пекех диверсиллё актсем Дубницра, Миявăра тата ытти вырăнсенче те пулнă. Нимёçсем октябрён пёрремёшёнчен продуктсем тăратма ыйтнине хресченсем нумайёшё харăсах бойкот туса ответленё. Хресченсем хушшинче нумай çынсене арестленё.

* * *

НЬЮ-ИОРК, сентябрён 29-мёш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчё Братиславăран (Словаки столици) пёлтернё тăрăх, унта антифашистла пропаганда саракан нумай çынсене арестлени çинчен пёлтернё.

Тука вёлерме тапăнни

ЛОНДОН, сентябрён 28-мёш. Рейтер агентстви çапла пёлгерет: Словакин пуканеллe премьер-министрне Тука вёлерме тапăнни Чехословакин авторитетлă çынниçем хушшинче паллă пулса, тăнă. Вёлерме тапăннă çын Словаки çарён офицерё пулнă, ăна арестленё.

(ТАСС).

Румыни çарёнчен салтаксем тараççё

Румыни халăхё вăрçашăн мар. Румыни хаçачёсем вăрçăра вилнё офицерсен вăрăм списокёсене пичетленипе пёрлех, фронтран тарнă дезертирсем çинчен пёлтерççё, вёсене тытас тёлёппе халăхран пулăшу ыйтаççё. «Универсул» хаçат шыраса тупмалли дезертирсен портречёсене те пичетлесе кăларать.

Çара илмен румынсем мобилизацирен, тăрса юлас тесе тёрлёрен сăлтавсем шыраççё, медицина комиссийёсене темиçе хутчен кёреççё, вуншар заявленисемпе, прошенисем çыраççё. Ялти халăх ыйтнине хирёç Бухарестри радио тăрăх кулленех ответсем, параççё, «Çар службинчен хăтарма пултараймастпăр» тесе, яланах пёр пек ответ параççё. (ТАСС).

Болгарире Германи оккупанчёсене ылханаççё

СТАМБУЛ, сентябрён 29-мёш. (ТАСС). Килсе тăракан, сведенисем Болгарире гитлеровецсене курайманни ӳссе пыни çинчен каласа параççё.

Сăмахран, çакă паллă: София хулинчи кинотеатрсенче, Германин вăрçă хроникисене обязательнăй йёркепе кăтартаççё. Геббельсăн мухтанчăк та суйăс, кăларнă картинисенчен халăх йёрёнет. Халăх çак хроникăсене кăтартса пётернё хыççăн, тин, кинотеатрсенче вырăнсем йышăнма тытăннă. Нумай пулмасть, София хулинчи кинотеатрсенчен пёринче кинохроникăна халăх шăхăрса тата тарăхуллăн кăшкăрса кётсе илнё. Çавăнтах кинотеатра полици çавăрса илнё те, çёр çынна ытла арестленё.

Гитлеровецсем Болгарире «В» (Виктуар) саспаллине — çёнтерӳ паллине пур майсемпе те сараççё, оккупацилене çёршывсенче, антифашистсем патех те пысăк ăнăçлăхпа туса ирттернё «В» кампанинчен жуликла, майпа копи ӳкерсе илеççё. София хулинчи урамсенче «В», саспаллине ӳкернё значоксене массăлла сутассине организацилене. Анчах та кунашкал, значоксене илме кăмăллакансем тупăнманпа пёрех, «Вăрланине, сутăн илместпёр» — теççё нумайёшё.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСЁ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителён — 3—97, редакци секретарён — 4—40, пропаганда пайён — 4—97, парти пурнăç пайён — 7—97, ялхуçалăхёпе промышленность пайёсен — 8—85, сыруэмпе рабселькорсен пайён — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулёпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6530. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 448. Ф. 6. 88 ▲ 84 п. л.